Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

101 (7418) № * Юн кун, 2006 çулхи ноябрĕн (чӳк) 29-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ



*Виталий Алексеевич Григорьев 1993 çултанпа районти шалти ĕçсен пайĕнче вăй хурать. Тăрăшулăхне кура 2 çул пуçлăх çумĕ тата обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн ертӳçи пулса ĕçлет. Шанса панă ĕçе ответлăха туйса, чунне парса пурнăçланăран коллективра пысăк хисепре.*

**Райадминистрацире**

## Пултаруллисене – Хисеп грамотисем

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ тата халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн Муркаш район организацийĕ, Хорнуй ял тăрăхĕн администрацийĕ, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» уçă акционер обществи, «Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ ыйтнине тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 2006 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнчи 499 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Татьяна Васильевна АЛЕКСЕЕВАНА**, Çатракасси шкулĕнчи пуçламăш классен учительне;

– **Елена Александровна АНДРЕЕВАНА**, Ярапайкасси шкулĕнчи биологипе хими учительне;

– **Олег Константинович ВОЛКОВА**, Муркаш шкулĕнчи информатика учительне;

– **Зоя Константиновна КОНСТАНТИНОВАНА**, Оринин шкул директорĕн вĕрентӳпе воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумне;

– **Ирина Петровна ФЕДОТОВАНА**, Сосновка шкул директорĕн вĕрентӳпе воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумне.

2. Нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçе хастар хутшăннăшăн:

– **Елизавета Ивановна КОСТИНАНА**, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» уçă акционер обществин нефть продукчĕсене валеçекенне;

– **Герман Валентинович ЩЕГЛОВА**, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» уçă акционер обществин газ котельнăйĕн операторне.

3. **Юрий Михайлович ФИЛИППОВА**, «Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн водительне, газ промышленноçĕнче нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн.

4. **Генриета Георгиевна ПЕТРОВАНА**, Хорнуй ял тăрăхĕн специалистне, вырăнти самоуправлени органĕсенче нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçе хастар хутшăннăшăн.

## Рекомендации участников публичных слушаний по проекту бюджета Моргаушского района на 2007 год

1. Одобрить проект бюджета Моргаушского района на 2007 год.

2. Рекомендовать:

– администрации Моргаушского района обратить внимание на планирование поступлений от доходных источников, используя данные налоговых и статистических органов по налогообразуемой базе территории, улучшить качество бюджетного планирования по всем направлениям расходования бюджетных средств;

– постоянной комиссии по бюджету, финансам, экономической деятельности, налогам и сборам Мургаушского районного Собрания депутатов рассмотреть предложения участников публичного слушания;

– Моргаушскому районному Собранию депутатов принять проект бюджета Моргаушского района на 2007 год в установленном порядке в соответствии с требованиями законодательства Российской Федерации, Чувашской Республики и Устава Моргаушского района.

Рекомендации приняты участниками публичных слушаний 24 ноября 2006 г.

**Йыхрав**

## Суйлавçăсемпе тĕл пулать

Паян, ноябрĕн 29-мĕшĕнче, Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕ Павел Владимирович Семенов Муркаш районĕнчи суйлавçăсемпе тĕл пулать. Граждансене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе район администрацийĕн 308-мĕш пӳлĕмĕнче 16 сехетрен тытăнса йышăнать.

**Конкурс**

## «2006 çулхи чи лайăх çемье»

Республикăра çак ятпа ирттернĕ çемьесен конкурсĕн финалисчĕсене декабрĕн 27-мĕшĕнче Шупашкарта вырăссен Патшалăх драма театрĕнче чысланă. Ку мероприятие ЧР сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министрĕ Нина Суслонова, вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Галина Чернова хутшăннă.

Республика конкурсĕн финалти турне пирĕн районтан Кăпасри Михайловсен çемйи хутшăннă. Çемье пуçĕ Владимир Витальевич «Лидер» хуçалăхра тĕп инженер пулса ĕçлет, мăшăрĕ Елена Осиповна – «Рябинушка» ача сачĕн заведующийĕ. Ксения хĕрĕ шкула çӳрет, Владимир ывăлĕ шкула кайма тытăнман-ха.

Михайловсем республика тĕп хулинчен дипломпа тата парнепе таврăннă.

**Усă калаçу**

## Редакци хăни – В.Г. Данилов депутат

*Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатпа вырăнти радиовещани редакцийĕсем Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне Владислав Григорьевич Данилова ял çыннисемпе усă калаçăва чĕннĕччĕ. Çавна май депутат ячĕпе хăвăра хумхантаракан, канăç паман ыйтусемпе сĕнӳсене ярса пама ыйтнăччĕ. Çапла туни ăнсăртран мар. Вулакансенчен килнĕ ыйтусем депутата вырăнсенчи лару-тăрăва лайăхрах курса-пĕлсе тăма, мĕнле ыйтусем çине ытларах тимлĕх уйăрмаллине палăртма, конкретлă ĕçсем туса ирттерме май параççĕ.*

*Тӳрех палăртмалла, ыйтусем сахал мар. Тĕрлĕ енлĕ вĕсем, паянхи пурнăçăн тĕрлĕ енĕсене пырса тивеççĕ.*

*Паян редакци хăни – В.Г. Данилов депутат. Сирĕн ыйтусене хаваспах хуравлама пулчĕ вăл.*

**Ыйту: – Больницăра 30 çула яхăн ĕçлетĕп. Ĕç укçи уйăхне 2000 тенкĕрен ытла тухмасть. Пĕлместĕп, мĕнле пурăнмалла ку укçапа. Юлашки вăхăтра сывлăха сыхлас ĕçре вăй хуракансен хăш-пĕр категорийĕсен шалăвĕсене ӳстерчĕç. Санитаркăсен ĕç укçине ӳстерес пирки мĕн шутлаççĕ-ши?**

**Муркаш район больницин санитарки (хушаматне асăнмарĕ).**

**Ыйту: – Ĕç укçи пĕчĕкки питĕ шухăшлаттарать. Шутласа пăхсамăр, халĕ вăл уйăхне 2000 тенкĕне те çитмест. Мĕнле пурăнмалла унпа? Хăçан ӳстерĕç пирĕн ĕç укçине?**

**Муркаш район больницин амбулаторийĕн санитарки (хушаматне асăнмарĕ).**

**Хурав:** – Çапла, пуçламăш сыпăкри медицина ĕçченĕсен ĕç укçине Федераллă бюджетран ӳстерчĕç. Ку категорие участок врачĕсем, пĕтĕмĕшле практика врачĕсем, çӳлте асăннă врачсене пулăшакан медицина сестрисем кĕреççĕ. Кунпа пĕрлех фельдшерпа акушер пункчĕсен фельдшерĕсен, васкавлă пулăшу уйрăмĕсен врачĕсемпе вăтам сыпăкри медицина персоналĕн ĕç укçийĕсем те ӳсрĕç. Шел пулин те, сывлăха сыхлассин ытти ĕçченĕсем (врачсем, медицина сестрисем, санитаркăсем) асăннă категорисене кĕмеççĕ.

Çавна каласа хăварма пултаратăп. РФ Социаллă аталану тата сывлăха сыхлас ĕç министерствинче халĕ сывлăха сыхлас ĕçе реформăлас ĕçсем малалла пыраççĕ. Сывлăха сыхлас ĕçре вăй хуракансен ытти категорийĕсен ĕç укçийĕсене ӳстересси пирки те ыйтăва татса парасса шанас килет.

**Ыйту: – Ялсенче техника спиртне сутакансем сахал мар. Милици ĕçченĕсем те вĕсене пурне те тенĕ пекех пĕлсе тăраççĕ. «Анчах пирĕн мĕн тăвас, алăран тытмасăр та ответ тыттараймастпăр»,- теççĕ вĕсем. Мĕнле чармалла-ши кун пек çынсене? Техника спирчĕ сывлăхшăн епле сиенлĕ пулнине пурте пĕлетпĕр вĕт-ха.**

**Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчен шăнкăравланă.**

**Хурав:** – Юлашки çулсенче Раççейре, республикăра, районта та суррогатсем, техника спирчĕ сутакансем йышланса кайрĕç. Çак суррогатсемпе наркăмăшланса больницăсене лекекенсем сахал мар. Вилекенсем те тĕл пулаççĕ. Кунсăр пуçне эрехе пула мĕн чухлĕ çын сусăрăнать, аманать, инвалид пулса юлать. Техника спирчĕпе антисептик хутăшĕсем уйрăмах сывлăхшăн хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Вĕсене вара хальхи вăхăтра хăш-пĕр аптекăсенче те туянма пулать. Аптекăсенче тата ялсенче «вилĕм сутакансене» хальхи вăхăтра каласа ăнлантарма май килмест. Çирĕпрех мерăсем йышăнни кирлĕ. Хальхи саккунсем ку йĕркесĕрлĕхе тĕппипех пĕтерме май памаççĕ. Районти шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракансем ку тĕлĕшпе юлашки вăхăтра çине тăрарах ĕçлеççĕ пулин те, татăклă улшăнусемех пур теме çук. Юлашки вăхăтра йĕркене пăсакан граждансене сахал мар тупса палăртса айăпланă, штрафсем тӳлеттернĕ. Апла пулин те суррогат сутакансем ялсенче тĕл пулаççĕ.

Нумаях пулмасть эпĕ Çатракасси ялĕнче пурăнакан хĕрарăмран çыру илтĕм. Унта «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăх администрацийĕ патĕнче вырнаçнă пушар деповĕнчи йĕркесĕрлĕхсем пирки сăмах пырать. Ялта пурăнакан темиçе хĕрарăм сăмакун тата техника спирчĕ темиçе çул ĕнтĕ сутать. Çырури фактсене тĕрĕслессипе халĕ ответлă çынсем ĕçлеççĕ. Пирĕн тĕллев – кун пек çынсем тĕлĕшпе вырăнсенче чăтмалла мар лару-тăру туса хурасси. Вĕсем пирки граждансен пухăвĕсенче сӳтсе явни те ытлашши мар. Суррогат сутса хавшак кăмăллă çынсен сывлăхне сиен кӳресси пирки пуçра шухăш пачах ан пултăр.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Чĕретлĕ çыру хатĕрлеççĕ**

## Ырă сĕнӳ яланах вырăнлă

Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕнче тата Правительствăра Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров ЧР Патшалăх Канашне çулсерен яракан черетлĕ Çырăва хатĕрлессипе çыхăннă тапхăр пырать.

Республикăра пурăнакансем çав пĕлтерĕшлĕ документ халиччен тунă ĕçсене туллин те тĕрлĕ енлĕн хак панине, малашнехи ĕçсен çул-йĕрне палăртнине лайăх пĕлеççĕ. Унта асăннă тĕллевсем, тĕпрен илсен, Правительствăшăн ĕçе кĕртмелли программа вырăннех шутланаççĕ. Çавăнпа та Çырура пурнăçăн мĕн пур енне шута илме, аталану çул-йĕрне туллин палăртма тĕллев лартаççĕ. Кунта, паллах, халăх шухăш-кăмăлне шута илмесĕр те май килмест. Çавна май сирĕн республикăри лару-тăрăва лайăхлатма пулăшма пултаракан ĕçлĕ те пархатарлă сĕнӳсем пур пулсан, вĕсене Президент Çырăвне кĕртме сĕнме май пур. Ку кăна та мар, эсир Президентран вăл е ку пуçару тĕлĕшпе хурав та илме пултаратăр. Апла пулсан çавнашкал мелпе усă курма ан манăр!

Сирĕн сĕнĕвĕрсене çак адреспа йышăнаççĕ: Чăваш Республики, Шупашкар хули, Республика лапамĕ, Правительство çурчĕ. Электрон почтипе те çыхăнма май пур: analit 2@ cap.ru, “Çыру валли”. Телефонсем: 39-35-73 е 39-35-75.

**Фестиваль**

## Янăратăр халăх юрри



Чăваш халăхĕн культура несĕллĕхне упраса хăварассипе республикăра чылай ĕç туса ирттереççĕ. Анчах та шкулсенче вĕренекенсем хушшинче чăваш халăх юррисене юрлакансен «Саркайăк» фестивалĕ кăçал республикăра пуçласа иртрĕ. Вăл Кашмашри Культура çуртĕнче ноябрĕн 24-мĕшĕнче пулчĕ.

Зонăсенчи смотр-конкурссенче çĕнтернисем 12 районтан хутшăнчĕç унта. Кашнийĕнех халăх юррисене 2 юрламалла пулчĕ. 27 участник фестиваль лауреачĕн ятне тата «Гран-при» çĕнсе илессишĕн вăй виçрĕ.

Конкурс условийĕсемпе чи пултаруллисене 10-ăна лауреат ятне пачĕç. Вĕсем Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Çĕрпӳ, Вăрнар, Элĕк, Етĕрне, Елчĕк, Шупашкар тата Муркаш районĕсенчен. 17 участник конкурс дипломанчĕ пулса тăчĕ. Республикăн пĕрремĕш фестивалĕн «Гран-прине» вара Оринин шкулĕнче вĕренекен Наталья Каликова çĕнсе илме пултарчĕ.

**Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ.**

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, асаттене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Анатолий Петрович СМИРНОВА** 50 çул тултарнă ятпа пур ырă кăмăлтан саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, вăрăм кун-çул, ĕçре ăнăçусем сунатпăр. Çемьере яланах килĕшӳ, тулăх пурнăç пултăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурри пирĕншĕн пысăк телей. Ачусемпе, мăнукусемпе килĕштерсе савăнса нумай çул хушши пурăнма Турри сана сывлăх патăр.

**Юратса саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**